Хакӗ 40 пус

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!




Пире вӑрҫӑпа хӑратакан чакӗ лешйенчи тӑшмансем пирӗн патран вӗсен столицисене Портландпа Сан-Джасинторан нумай ҫывӑххине пӗлсе тӑччӑр.

(„Правда")

Фашиспа ачи.

— Атте, Мускавран Ҫурҫӗр Америкари Пӗрлешӳлӗ Штатсенчи Сан-Джасинто хулине вӗсме ҫывӑхрах-и йе пирӗн патшалӑх столицине вӗсме ҫывӑхрах?

— Мӗ-ӗн! Ах, йӗксӗк!.. Ак, кӗпӳна уҫсан, кӑтартӑп сана хӑш хулана ҫывӑххине!..

# Хурăнлăха кайма тухсан

Пайан уйăхăн çутатма йураман иккен. Тĕксĕм пĕлĕтсем хушшине пуçтарусăр сапаланса кайнă темиçе çăлтăрпах çырлахмала пулнă.

Пытармăпăр: каçĕ тĕттĕм те уçă тăнă. Чаплах пулман каçĕ. Ун пек каççем сайрарах пултсăрччĕ, йулташсем.

Çапах та Ваçили Павлăвичăн кăмăлĕ çĕкленнĕ. Вăл хăйне пăхăнакан учреждени умĕнче тăрса пĕр çӳлĕ те сарлака хулпуççилĕ çынăн аллине хытăн чăмăртанă.

Ку тете ăна тӳррех кăмăла кайнă. Тĕттĕмре унăн сăнĕ курăнман пулин те, анчах сасси вара çав тери чаплă та бархăтлă тухнă. Вăл лăпкă та çирĕп çын пулнине Ваçили Павлăвич пĕр сăмахранах туйса илнĕ.

„Кунашкал çынсем кирлĕ пире. Тинех мана ваљљи заместитĕл тупăнчĕ“—тесе шухăшларĕ Ваçили Павлăвич.

— Салам, салам! Каланă пек, уру çăмăл пултăр! Мĕнле чĕнмеле-ха сире?

— Иван Сергейĕвич!

— Пит аван. Йурататăп Иван Сергейĕвичсене. Тургенĕв та Иван Сергейĕвич пулнă. „Записки охотника“ вуланă-и?

— Татăкăн-татăкăн вулакаланă. Анчах пуринчен ытла прозăлă сăввисене йурататăп. „Йепле чипер те чĕрĕ пулнă розăсем!..“

— Сирĕн сас йапăх мар иккен. Йурлаттăримĕн?

— Йепле пултăр тата, Ваçилий Павлăвич? Обйазатĕлнă йурлатăп. Халăх йуррисене тата бурлак йуррисене йурласси вăл—манăн специаљнăç, темеле.

— Акă мĕн! Машинă çине ларар та Хурăнлăха кайар. Вăл кунтан вунсакăр километăрта. Пирĕн хула çывăхĕнчи канмали çурт. Чаплă çутçанталăк. Биљйард. Пулă тыт. Кăçал уланкă лайăх хыпаť теççĕ ăманпа. Унта çĕр каçăпăр. Пурин çинчен те калаçса татăлăпăр. Епĕ темиçе кунтан отпуска кайатăп. Кăçал Цхалтубăра канма шутлатăп-ха. Унта кукша çынăн çӳçĕсем шăтакан пулаť, тенине илтнĕччĕ. Кайас умĕн сирĕнпе пурин çинчен те калаçса татăлас тетĕп, Иван Сергейĕвич. Сире тепрер кунтанах ĕçе тытăнтармала тăвасчĕ.

— Пысăк тав сире уншăн.

— Вăт, лайăх! Кайар Хурăнлăха. Каçĕ пайан мĕнле. „Каçĕ тĕттĕм, сывлăш уçă, ăсатсам мана, Маруçă“...

Вулакан, сана çак тĕлпулу мĕнле сăлтавсенчен килнине паллаштармалах пулаť пулĕ. Ваçили Павлăвич тахçанах облăçри центăртан хăйне ваљљи заместитĕл тупса пама ыйтнă.

Виçĕмкун вăл телеграммă илнĕ. Ун патне заместитĕле темле Çвиридăв йатлă çынна йама палăртни çинчен пĕлтернĕ. Çур сехет кайарах кăна гостиницăран Çвиридăв телефон тăрăх калаçнă. Вăл çитнĕ кăна. Курса калаçасшăн та ĕçе тытăнасшăн.

Ваçили Павлăвич усăлăрах та савăнăçлăрах пултăр, тенĕ пулас. Çавăнпа та Хурăнлăха кайма шутланă. Çитменнине ыран канмали кун. Унта вара çутçанталăк уççинче хăйĕн çĕнĕ заместитĕлне пур ыйтусемпе те паллаштарасшăн пулнă. Вăл крыљцана тухнă та, хăнана хавассăн кĕтсе илнĕ. Унтан машинă çине кĕртсе лартнă.

Хурăнлăха кайнă чухнех Ваçили Павлăвич Иван Сергейĕвича районри уйрăмлăхсемпе, промышлĕннăçпа, кадрсемпе паллаштарма пуçланă т. ыт. те.

Лайăхрах итлеме тăрăшăр, Иван Çергейĕвич. Сирĕн кунта мансăрах уйăх çурă ăшша пиçмеле пулаť. Пурне те пĕлмеле. Пирĕн уйрăм йышши район. Çавăнпа та сыхланулă, сыхланулă тата сыхланулă пулмала. Уйрăмăнах хаçат корреспонденчĕсем умĕнче асăрханулă пулăр...

—У-у, вăл корреспондентсемпе рецензентсем мана!..

— Пит те тĕрĕс. Çенсаци пултăр кăна вĕсене, пирĕн вара чăт кунта. Кирек йепле çекретлă цифăр хаçата çакланĕ те—скандал тухса кайĕ. Астăвăр: 7—8-мĕш №-лĕ савăт моторсем тума çĕнĕ задани илнĕ,—плана 33 процент ӳстермеле. Ку цифăра Иван Сергейĕвич никам та пĕлмеле мар.

— Паллах. Епĕ йаланах хамăн выступленисенче цифăрсенчен сыхланатăп.

— Пит те тĕрĕс тăватăр. Тата Хăйăрлăхра уйрăм ĕç ваљљи çĕнĕ цех туни çинчен те никама та пĕр сăмах шарламала мар.

—Йурĕ. Еп ун пек темăсем патне тĕкĕнме те шухăшламастăп. Йăлапа куљтурă ыйтăвĕсене ытларах çавăрса илме тăрăшăп.

— Пит те тĕрĕс. Пирĕн ĕçре пуринчен те ытла сыхланни кирлĕ. Еп ку тĕлĕшпе йытта та çисе йанă пулĕ, есĕр те...

— Манăн та йытта çимеле-и?

— Ха-ха-ха... Тĕрĕс каларăр та. Çивчĕ. Сирĕн йумăр йеннеле сулнăк пур пулас...

— Ăçтан-ха унсăр, Ваçили Павлăвич? Йумăр вăл—манăн специаљнăç, темеле.

— Каллех лайăх каларăр. Çитĕ, шӳт тума пăрахар та, ĕç çинчен калаçар.

Машинă шоççе тăрăх шăлтараť. Çулăн икĕ йенĕпе ĕмĕрхи хырсен мĕлкисем палăраççĕ. Машинă ăшĕнче икĕ çын ĕç çинчен калаçса пыраççĕ.

— Халĕ тата сире хамăрăн хăшпĕр работниксем пирки асăрхаттарам. Кадрсен начаљникĕнче ĕçлекен Çеменчук çине витĕртерех пăхăр. Епĕ ăна шансах каймастăп. Сăлтавĕ те çук та, çапах. План пайĕн начаљникĕнче ĕçлекен Сазанăвран сыхланăр: чăкраш çын вăл. Крафтпа та уçăмлă пулма йурамасť: вăл пирĕн çĕнĕ çын, кам пĕлет ăна... Ăнланатăр-и?

— Ăнлантăп, Ваçили Павлăвич.

— Тата тепĕр услови. Каçарăр мана. Анчах сыхланулă, сыхланулă тата сыхланулă пулас пулаť. Епĕр кунта иккĕн çеç. Пирĕн калаçу çинчен виççĕмĕшĕн пĕлмеле мар...

Сасартăк тĕттĕмре кулни илтĕнчĕ. Ваçили

Павлӑвич та мар, Иван Ҫергейӗвич та мар: такам виҫҫӗмӗш кулаҫ.

Шофӗр Петӗ Кирейӗв кулса йанӑ иккен.

— Ваҫили Павлӑвич,—терӗ Петӑ машинине хуллентерех чуптарса,—епӗ ҫын мар-и, вара? Каҫарӑр, манӑн асӑрхаттарни вырӑнлах та мар-и, тен. Анчах епӗ кӳренетӗп. Есӗр кунта мана пӗлме йураман йапаласем ҫинчен калаҫрӑр, мана чӗрӗ ҫын мар, чул, терӗр пулас.

— Молодец, Петӑ! Кӑна ес тӗрӗс калатӑн. Анчах та епӗ сана шанатӑп. Пӗрремӗш кун мар пӗлетӗп сана. Ҫитменнине тата епӗ илтместӗн пуљ тесе шутланӑ. Паллах—сыхланулӑх, сыхланулӑх тата сыхланулӑх. Каҫӗ йепле тӗттӗм. Ав, катара, ҫутӑсем курӑнаҫҫӗ. Хурӑнлӑх вӑл. „Умра: ҫутӑсем, ҫутӑсем...“ Короленкӑ ҫапла каланӑччӗ пулас... Тем сивӗрех пек туйӑнаҫ. Ҫанталӑк нийепле те йусанса ҫитеймест.

Ваҫили Павлӑвичӑн хавас кӑмӑлӗ сӳрӗлсе карӗ. Хӑни ҫакна часах тавҫарса илчӗ те, калаҫӑва урӑх йеннелле ҫавӑрса йама шутларӗ.

— Ваҫили Павлӑвич, хӑвӑр кайиччен ман концерта пырса курмӑр-ши?

— Мӗнле концерта?

— Тӗрлӗрен йапаласем. Концерт икӗ пайлӑ пулаҫ. Пӗрремӗш пайӗнче—илемлӗ вулани, иккӗмӗшӗнче—кулленхи ыйтусем ҫинчен хывнӑ йурӑсемпе куплетсем.

— Ха-ха-ха!.. Пысӑх сулнӑк пур сирӗн йумӑр йеннелле. Пит те аван курӑннӑччӗ пулӗ афишӑра: „Управљайушчи заместителӗ Ҫвиридӑв хӑйӗн репертуарӗнче“ йепле, е?!

— Ӑнланаймастӑп, Ваҫили Павлӑвич! Каҫарӑр мана: еп ни замеҫтителӗ мар, ни Ҫвиридӑв мар.

— А? Мӗн? Ӑнланмастӑп. Каллех шӳт тӑватӑр пулас?

— Ҫук, шӳт тумастӑп. Чӑн сӑмах. Паллашар: Иван Йужнӑй, рассказчик, куплетис, характӗрлӗ романссем йурлакан. Сирӗн хулана ҫуллахи гастроле килтӗм. Пит те пысӑк тав тӑватӑп сире ҫакнашкал хисеп туса йышӑннӑшӑн...

— Ҫвиридӑв ӑҫта? Вӑл вӗт манпа гостиницӑра калаҫрӗ. Петӑ! Чар машинӑна!

— Тӗрӗс, Ваҫили Павлӑвич! Ман умра сирӗнпе темле Ҫвиридӑв гостиницӑран калаҫрӗ. Анчах вӑл буфетран час тухаймарӗ. Еп сирӗн пата пытӑм.

— Мӗне курса есӗр манпа ҫакнашкал калаҫса пытӑр. Мӗнле хӑйулӑх ҫитрӗ! Мӗн ку сире, театӑр-и?! Петӑ, ҫавӑр кайала. Есӗр те, мӗнле унта сире,—Севернӑй-и, йе Йужнӑй тесе чӗнеҫҫӗ-и—, урӑх манпа пӗр сӑмах та ан калаҫнӑ пултӑр! Еп курнӑ-курман ҫынпа труках калаҫма йуратакан йышши мар.

Кайала ҫаврӑнчӗҫ. Каҫӗ тӗттӗм те усӑ. Чаплах пулмарӗ каҫӗ. Ун пек каҫсем сайрарах пултсӑрчӗ, йулташсем!

**Г. Рыклин.**

*(„Крокодил“ журналтан)*

# СЕКРЕТ

— Мӗн пулчӗ сана, Микулай, мӗншӗн сӳрӗк есӗ пайан йе ӗҫ ытла йавӑр лекри, йе сывӑ мари,—упӑшки шухӑша кайнӑ пирки ыйтрӗ Микулайран арӑмӗ Кулине.

— Пайан коммуниссен хупӑ пухӑвӗ пулчӗ. Ну, вӗтрӗҫ райфо пуҫлӑхне Петрова, ну, вӗтрӗҫ, темле чӑтайрӗ!

Хупӑ пухура Петрова мӗншӗн вӗтнине калаҫа пачӗ.

— Сана, Колӗнкӑ, йатлаҫмарӗҫ-и?

— Мӗншӗн йатлаҫас мана! Ҫывӑрас, чунӑм, анчах иксӗмӗр калаҫни ҫак вырӑн ҫинчех пултӑр, ҫынна ан кала!

— Мӗн ес, Колӗнкӑ, епӗ вӗт-ха санӑн арӑму!—ответлерӗ хирӗҫ Кулине.

* * *

— Аа-а, Маруҫӑ! Сывах-и?—ҫатма ҫине тураса тултарнӑ какайӑ ӑшалама плита ҫине тухса лартрӗ Кулине.

— Сывах-ха, Кулине, мӗн пӗҫерсе ҫитерес терӗн йулташна?

— Какай ӑшалас терӗм, есӗ мӗн пӗҫеретӗн?

— Пирӗн ҫӑмарта пӗтменччӗ те, ҫавӑн йулашкине пӗҫерес терӗм-ха.

— Илтсе-и есӗ райфо пуҫлӑхӗ Петров ҫинчен.

— Мӗн пулнӑ?

— Петровӑн савӑнса пурнасси хӳри вӗҫӗнчех, ӗнер коммуниссен хупӑ пухувӗнче Петрова райком ҫекретарӗ хытӑ йатларӗ, тет, партирен кӑларса ҫапатпӑр тесе йунарӗ, тет.

— Чӑнах-и?

— Чӑнах ҫав.

— Ҫапла кирлӗччӗ-ха ӑна, хи-хи-хи!

— Ха-ха-ха!

— Тупнӑ кулмали, ҫаксемех вара кӑваписем ҫыпӑҫнӑ пекех пӗрле пурӑнаҫҫӗ,—ним шарламасӑр ҫӗрулми тасатса тӑракан райҫӗрпайӗн агроном амӑшӗ Михейӗва чӑтайманнипе чӗнчӗ.

— Асту, ку сӑмахсем секрет,—терӗҫ те Кулинепе Маруҫӑ икӗшӗ харӑс пиҫнӗ апатсене илсе пӳлӗмсене кӗрсе ҫухалчӗҫ.

**И. Сӳпенкке.**

# Хуралҫӑ ӗҫне хакламан пуҫлӑх



— Пирӗн предприйатийе ӗҫлеме кӗме санӑн рекомендаци ҫук. Рекомендацисӗр ӗҫе илме пултараймастӑп. Кӗресех тетӗн пулсан, хуралҫа илӗппӗр.

# КУЛИНЕ КИНЕМИ

Кулине кинемине, ватӑлнӑскере, колхозран мӗн памалине ахалех панӑ. Анчах вӑл, иртнӗ ҫулсенче хӑйне лайӑх, ҫирӗп тытнипе, ӗҫе тухмасӑр тӑма пултарайман, йе апат пӗҫерне ҫӗрте пулӑшнӑ, йе чӑхӑ-чӗпӗсемпе аппаланнӑ. Анчах иртнӗ ҫуркунне, Кулине кинеми ним сӑлтавсӑрах шухӑша кайнӑ:

— Ех, тур, тур! — тенӗ пуҫне хуйхӑлӑн сулласа ларса,— ватӑлса ҫитрӗм, вилме вӑхӑт ҫитрӗ пулас... текех ҫӗршывпа пурнӑҫ илемне курас ҫук ӗнтӗ. Атте те, анне те, Ваҫҫухха акка та алӑпилӗк ҫулран ытла пурӑнаймарӗҫ, вилчӗҫ. Епӗ те пурӑнӑҫ саккийӗн вӗҫне ҫитрӗм пулмала. Хӗрӗм Васса! Йулашки ҫул хӑт виличчен ӗҫлемесӗр, канлӗ пурӑнса вилес тетӗп, тенӗ Кулине кинеми.

Хӗрӗ амӑшӗ шухӑшӗпе килӗшнӗ, ӑна ӗҫе хупӑрламан.

Ҫапла Кулине кинеми—„вилес карчӑк“ тесе, ӗҫе кӑшт та йермерӗ, килтех пурӑнчӗ.

Вӑхӑт ҫавҫавах иртрӗ.

Кулине кинеми—вилес карчӑк вилмерӗ.

—Ҫук, ку саманара часах ватӑлса вилмеҫҫӗ. Йӑнӑшрӑм епӗ, хытах йӑнӑшрӑм ҫав... Кам пӗлет, тен татах вунӑ ҫул пурнан-и?—тесе ыйтрӗ Кулине кинеми хӑйӗнчен хӑй; унтан йӑвашшӑн та кӑмӑллӑн кулса йачӗ.—Вӗт, мӗнле ырӑ ку ҫӗршывра. Вилме вӑхӑт ҫитнӗ ватӑсем те вилмеҫҫӗ... Ӗҫлесчӗ-ха вӑй ҫитнӗ чух, пурӑнасчӗ-ха нумайтарах,—терӗ те Кулине кинеми, унӑн сӑн-питӗнче кулӑ выљђаса илчӗ.

Халӗ Кулине ҫакӑ пулса иртнӗ ӗҫе аса илсен каҫса кайсах кулать. Ара, ма кулса хавасланмӑн. Халӗ вӗт хӗрӗпе пӗрлех тата танах колхозра ӗҫлет: Кулине кинеми—чӑхӑ-чӗпсен ферминче, Васса—ӗне ферминче.

**М.**

# ЙĂЛАЙ ЙĂКĂНАЧĔ

Ĕлĕкрех, туйа мĕне кайсан Йăлай Йăкăначĕ: „Вăлта хулли пĕвĕм пур, авкаланат҄, хуҫкаланат҄, туй илемне вăл кӳрет"—тесе йурлатчĕ хăй куҫĕнчен пĕтĕм халăха пăхтарса. Анчах авланнă хыҫҫăн Йăлай Йăкăначĕн пĕвĕ авкаланми пулчĕ, ĕлĕк туй илемне кӳрнĕскер, колхоз илемне йаракан пулса кайрĕ.

Колхоз йышĕсем ывăнма пĕлмесĕр тыр вырасҫĕ. Йăлай Йăкăначĕ ĕнтĕркесе ҫӳрет. Кĕлте кутне тăрсан та уй суса тăрат҄, кĕлтине ҫыхнă чухне те тем ҫинчен шухăша кайса вăхăта иртерет. Кăштах ĕҫлесен выртса канса илет. Тем амак пулнă?

Арăмĕ ăна:

— Мĕн ӳрĕк-сӳрĕк ĕҫлетĕн! Ҫынсем тар йухтарса ĕҫлеҫҫĕ, есĕ пур, пĕҫҫӳне тăратса выртатăн!—тесе вăрҫат҄.

— Чирлерĕм!—тет Йăкăначĕ пĕҫҫине хыҫса.

— Мĕнле чирпе?—ыйтаҫҫĕ колхозниксем.

— Рак чирĕпе,—тет Йăкăнат ним шухăшласа тăмасăр.—Хырăма рак кĕрсе кайнă. Ой, ыратат҄! Чĕрем картах татăлса карĕ пулмала. Ой!—ҫĕлен пек авкаланнă пек пулат҄, пичĕ ҫине асап йĕрĕсем кăларса.

— Йытă ҫитĕрех! Йăкăнатăн чĕри сылтăм йенне куҫса ларнă. Сылтăм йенчен тытса кăтартат҄,—тесе кулаҫҫĕ колхозниксем.

— Апла пулсан чĕре мар, хăмпу ыратат҄ пулмала. Мĕн ыратнине ăҫтан пĕлем! Тухтăр ĕҫне вĕренмен,—тесе урлăн ҫавăрса хурат҄ Йăкăнат хулпуҫҫисене пăркаласа илсе.

— Ех, йулташ, питех те пысăк ĕҫсем пулса иртеҫҫĕ пирĕн уй-хирте! „Ҫĕнĕ вăй" колхоз пире социалисăм ăмăртуне чĕннĕ. Есĕ ӳрĕк-сӳрĕк ĕҫлесех вăхăта иртерсе йарасшăн.

Йăлай Йăкăначĕ ӳкĕте кĕмест.

Ирхине те кĕтӳсем йарсан тин сĕтĕрĕнсе тухат҄.

Ҫу каҫипе халăхпа тан пĕре кăна тухрĕ. Ҫанҫурăмне пин те икҫĕр аллă пăрҫа йерсе сыраннă етем йевĕр хыҫкаланса тухрĕ те, сăмаха тӳрех персе йачĕ:

— Пайан ĕҫлеме кирлĕ мар, йулташсем!—терĕ.—Ĕҫлесессĕн те усси пулас ҫук.

— Ма усси пулас ҫук?—тесе тĕлĕнсе ыйтаҫҫĕ колхозниксем.

— Манăн сăнани пур. Кунта килнĕ чухне качака ман ҫинеле пăхса сухалĕсене темиҫе хутчен силлесе тăчĕ. Ун пеккине курсан, ĕҫлеме кайиччен кайманни усăлăрах пулат҄. Тата иртнĕ касхине ҫывăрнă чухне сылтăм хăлхана пăрҫа кĕрсе кайнă. Шыв йарса аран кăлартăм. Ку ҫăмăр пуласса систерет, тесе пире ĕнентерме хăтланат҄.

Тăп тăрă пĕлĕт тӳпи йанках уҫă выртат҄. Вăл ҫăмăр пуласса ĕмĕтленет.

— Лаша кĕҫенсен... Тфу... калаймарăм... лаша кĕҫеннĕ чухне хӳрине виҫĕ хутчен пăрса илсен, ҫав кун кăнтăрлапа ҫăмăр пулат҄,—тет Йăкăнат малала, ĕненмелерех пултăр тесе.

Колхоз лашисем пĕр-пĕрне палласа кĕҫенсе илчĕҫ. Вăл—ҫăмăр пуласса сиснипе, тет. Ех, тăварламасăрах пĕҫерсе тунă ухмах, калаҫма вăтанасчĕ хут҄ йытăпичĕн!

Ĕҫлеме „айук" текенскер, кĕсел ҫиме сĕтел хушшине арăмĕнчен малтанах кĕрсе ларат҄.

Тырă вырма тухас умĕн пĕре Йăкăнат арăмĕ упăшкине, ҫăкăр кăмака ҫинче выртнипех пулманнине систерес шутпа, икĕ кун ҫăкăр памасăр усраса пăхнă.

— Мĕн тума сана ҫăкăр ҫитерес? Кăҫал та есĕ ĕҫлемесĕрех пурăнасшăн. Сан пек кахал упăшка мана кирлĕ мар. Тухса кай ĕҫлемесĕр ҫитерекенне шырама!—урине тапсах вăрҫнă Кулине.

Ларсан-ларсан Йăкăнат кĕпе-йĕм ҫăвакан арăмĕ патне метр ҫурăлă пусăмсемпе утса пырат҄. Питĕнче хастарлăх палăрат҄:

— Арăм! Пайан та ҫăкăр пĕр чĕл те пулин памасан, епĕ ҫакăнса вилессĕн туйăнмаст҄-и сана?

— Ҫăкăр? Акă парам сана турчкапа ҫăкăр!

— Мана мĕн! Тăлăха йулатăн,—тет сассине антарса.

— Вилсессĕн пытаратпăр. Тупăку ҫине ларса сăра ĕҫĕпĕр,—тăрăхлат҄ Кулине.

Йăкăнат пуҫне усат҄.

Арăмĕ килкартинеле пăхса шухăша кайса тăрат҄. Йăкăнат ун патне хыҫалтан кушак пек утса пырса, хоп ытамласа илсе кулса йарат҄.

— Кулине, чунăм!

Кулине чĕнмест.

— Сана епĕ нимĕртен те ытларах йуратататăп. Сана йуратнипе ҫак хăнкăла ҫурăкне те кĕрсе кайма хатĕр.

— Ай-йай! Хлыҥ есĕ! Сан пек хлыҥпа калаҫма нумай ăс кирлĕ. Тфу, упăшка пулчи ку—ĕҫлемесĕрех апат ҫийесшĕн аптрагса ҫӳрет,—терĕ Кулине чалăшрах куҫĕсене хайаррăн хĕссе.

Йăкăнатăн шанчăк хутаҫҫи ҫĕтĕлме пуҫларĕ. Пуҫне хыҫса пăхрĕ. Пуҫĕ нимĕн те каламарĕ. Вырăн ҫине кайса выртрĕ.

Чылай шухăшласа выртрĕ ним сасăсăр. Ача чухне выљаса ҫӳренисем аса килчĕҫ тĕтревлĕн. Выљаса ҫӳреччĕ-ҫӳреччĕ те ун чухне, амăш патне чупса пырса:

— Анне, ҫăкăр пар-ха! Касса пар ĕнтĕ тетĕп,—тесе амăшĕн кĕпе аркинчен ачашшăн туртăначчĕ.

Амăшĕ ним сăмахсăрах ҫăкăр касса параччĕ, хăш чухне хытă чăкăт татăкĕ тыттараччĕ.

— Анне, анне!—тет Йăкăнат ĕлĕк амăшĕ хыҫҫăн чупнине аса илсе.

Йăкăнат „анне" тесе кăшкăрса йанинчен арăмĕ ахăлтатсах кулса йачĕ. Унтан кăпăк ҫыпăҫса тулнă сылтăм аллине курита ҫинче тытса силлесе илчĕ те:

— Ухмаха йерме пуҫланă пулсан, ҫитерем еппин пĕррелĕхе сана,—терĕ ҫемҫелнĕ кăмăлпа,—анчах ҫинĕ хыҫҫăнах ĕҫлеме кайнă пултăр.

Пĕр чашăк ҫăра турăх тăраниччен ҫимелĕх лартса пачĕ.

Упăшки ҫисе тăрансан, арăмĕ ун ҫине хăйĕн ĕҫпе ĕшеннĕ аллине хурса, лăпкăн кăна ыйтса пăхрĕ:

— Кайатăн-и ĕҫлеме?

— Пасара кайманни нумай пулат҄. Ыран пасар курса килес. Кайран...

Малала калас сăмахне тупаймарĕ. Пит пысăк шухăша кайнă пек пулса, кантăк витĕр пăхса тăркаланă хыҫҫăн, урисене урай тăрăх йăвăрăн сĕтĕркелесе, хăйне чĕриклетсе йышăннă кроват҄ ҫине выртрĕ.

**Иван Мучи.**

# ВУЛАКАНСЕН ЖАЛĂБИСЕМ

## *Паха „Капкăн“!*

Аҫа, „Капкăн“, шăнасене туртса илер. Шупашкарти аптекăра илнĕ „липучкă“ (шăнасене ҫыпҫăнтарса вĕлерекан) хут ҫине вĕсем ларасшăн мар (1 тенкĕ те 75 пус парса илнĕ 5 хут ҫине икĕ ерне хушшинче пĕтĕмпе 9 шăна ҫеҫ ларнă). Хăш-пĕр шăни пырса ларам пекки тăваҫ те, хучĕ ҫумне ҫыпҫăнса ларайман пирки тарăхса, вĕҫсе кайаҫ.

Йĕпетсе хумали шăна хучĕ ҫине ларсан та, ман пӳртри шăнасем каранса выртасшăн мар. Вăл шăнахучĕ ҫине „смерть мухам“ (шăнасене вилĕм) тесе ҫырнă. Ман пӳртри шăнасем „шăнасене вилĕм“ тесе етем чĕлхипе ҫырнине вулама пĕлмеҫҫĕ пулмала, ҫавăнпа та ҫав хут ҫине ларсан вилме кирлине пĕлмеҫҫĕ. Вăл—„шăнасене вилĕм!“ тенĕ сăмахсене, ман шухăшпа, шăна чĕлхипе ҫырмала. Вара вĕсем унта ларсан вилме кирлине пĕлĕҫ,—тесе шухăшлатăп аптранă йенне. **Иварăв.**

## *„Капкăнăм“!*

Пирĕн Микушкелĕнче (Куйбышĕв облăҫĕ) „Шăлсене таса тытни—сывлăха упрани“ тесе ҫыра-ҫыра ҫапнă плакатсем пур. Кооператив та, тавар илме пыракана культурлă етем тăвасшăн, шăл тасатмали порошок сутаҫ. Анчах шăл тасатмали шчуткă тенине вара таврара ниҫта та тупса илме ҫук, анчах ку, ман шухăшпа нимех те мар, ал пӳрнипе шăлса та тасатма пулаҫ. Анчах пĕлесчĕ: шăла пӳрнепе шăлса тасатсан культурлăрах-ши, йе лозунгпа тасатсан культурлăрах пулаҫ?

**Ҫидăрăв.**

## *„Капкăн“ тус!*

Чăвашиздатăн укҫа-тенкĕ йенчĕн ĕҫсем питех мар штулĕ: „Илемлĕ литература“ журнал 1937-мĕш ҫулта та тухаҫ, тесе подписчиксенчен укҫа пухрĕҫ те, журналне кăларма пăрахрĕҫ. Журнал тухма пăрахни ҫинчен нихăш изданире те пĕлтерӳ тухман пирки, манăн ҫывăх йулташăм ăна илме май уйăхĕнче (журналĕ хупăнсан) ҫырăннă.

Халĕ подписчиксен журнал та ҫук, подпискă укҫи те кайала килмест.

Ун пек килĕшӳсĕр хăтланакана пирĕн халăх хушшинче мĕнле каланине есĕ пĕлетĕнех ĕнтĕ. Чăвашиздат пирки епĕр ун пек каласшăн мар, анчах ҫулталăкшăн ҫырăннă 10 тенкĕ укҫана кайала илесехчĕ.

Салампа 592-мĕш № подписчик.

## *Савнă „Капкăн“!*

Шупашкар хули мунчин администрацине „тип мунча“ кăтартатăнах пулĕ.

Мунчара, хывăнмали-тăхăнмали пӳлĕмре мăн тĕкĕрсем (куҫкĕскисем) пурччĕ. Халĕ, мунчана ремонт тунă хыҫҫăн, ҫав тĕкĕрсене таҫта илсе кайнă. Мунча кĕнĕ хыҫҫăн тĕкĕр витĕр пăхса ҫи-пуҫа йакатма кирлĕ мар; ҫи-пуҫа йакатма мунча—кил мар,—тесе шухăшлаҫҫĕ пулмала. Мунчара ҫăвăнса пĕтернĕ хыҫҫăн тĕкĕр витĕр пăхса ҫӳҫ-пуҫа йакатма вăхăт кирлĕ.

Тĕкĕр витĕр пăхса вăхăт ирттермеле мар туса панăшăн, хула совечĕ мунча билетне хăпартса пăхрĕ. Ремонтченех лайăхчĕ: тĕкĕр те пурччĕ, билет хакĕ те йӳнĕччĕ. **Салмин.**

## *Йуратнă „Капкăнăм“!*

Вĕреннĕ ҫынсем шутласа кăларнă тăрăх, Галлей комети кашни 76 ҫултан Хĕвел патне ҫывхарса курăнакан пулаҫ. Вăл йулашки хут 1910 ҫ. курăннă, 1986 ҫ. тата курăнмала, теҫҫĕ.

Пирĕн Шор-Пайраш (Трак р.) йалĕнче кино йулашки хут 1936 ҫ. пулнă, тата хăҫҫан пуласси паллă мар.

Вунă уйăх кĕтнĕ хыҫҫăн тата мĕнчухлĕ кĕтмелине искусствă управленинчи „галлейсем“ шутласа пама пултарассăн туйăнаҫ. Санăн шухăшупа мĕнле пек? **С. Данилăв.**

---

# Р А З У М Ă В

**(З а д а ч)**

Шăхасан районĕнче Ҫĕнĕ Чулкассинчи туллимар вăтам шкулăн директăрĕ Разумăв пур.

1936 ҫулта Разумăв ҫенҭабĕр уйăхĕнче пĕр учиҭĕлĕн ĕҫ укҫине катса ведăмăҫ тăваҫ те, учиҭĕле тивĕҫлĕ укҫана хăйне илет.

Анчах учиҭĕл шутлама пĕлекенскерри лекет. Вăл акă ҫапла шутлаҫ: Вуннăн ҫурринчен пĕрре кăларса пăрахса, ҫĕре хутлаҫ. Хутласа пулнинчен тата вун улттă кăларса пăрахаҫ те, Разумăв ҫулталăк хушшинче хăйне миҫе тенкĕ тивĕҫсĕр илме пултарнине пĕлет.

Учиҭĕл вара: Разумăв халĕ пĕр уйăхри ĕҫукҫине анчах илме ĕлкĕрнĕ, ним шарламасан хам шутласа илнĕ хисепе пĕтĕмпех илме пултарĕ. Ҫавăнпа райҫутпайне кайса пĕлтерес, тет. Ҫапла вăл окҭабĕр уйăхĕнче Шăхасан райҫутпайне кайса хăйне тивĕҫлине илет.

Ҫакăн хыҫҫăн Разумăв ҫак учиҭĕле чылайччен ҫиленсе ҫӳрет, ăна выгăвăр параҫ. Кайрантарах ҫак ĕҫсемшĕн Разумăва хăйне те выгăвăр параҫҫĕ. Куншăн Разумăв учиҭĕле тата ытларах ҫиленсе апрел уйăхĕнче ҫак учиҭĕлĕн ĕҫукҫинех каллех малтанхи чулах катса хăйне илет.

Разумăв, ăна чаракансем пулман пулсан, ҫак учиҭĕлĕн ĕҫукҫинчен ҫулталăкра миҫе тенкĕ катса хăйне илме пултарнине тата ҫенҭабĕрпе апрел уйăхĕсенче миҫешер тенкĕ катса йулнине шутласа пĕлмеле.

Унтан тата Разумăв малашне те ҫав шкултах директăр пулас-пулас маррине пĕлмеле.

**Шурсухал.**

# ГЕСТАПОРА



— Господа! Епӗ сире пӗр ырӑ мар хыпар ҫинчен пӗлтерме чӗнтертӗм—Совет Союзӗ полюс урлӑ Америка иккӗмӗш хут вӗҫсе каҫнӑ.

# ХАМПА ПУЛНӐ

— Итле-ха,—терӗ Славин йулташ мана,—хаҫат-журналсенче есӗ фельетонсем ҫыркалатӑн. Сана пӗр истори каласа парасшӑн. Ҫав истори ҫинчен есӗ журналра мӗнле те пулин ҫырса кӑлар. Анчах манӑн хушаматӑма ан асӑн. Ӗҫе манпа пулнине те ан асӑн. Килӗшетӗн-и?

— Йурӗ! Хушаматна асӑнмӑп,—терӗм.

— Апла пулсан итле,—терӗ.—Каласа парам. Пӗрре, учрежденире ӗҫлесе ларнӑ хушӑра, ман пата пӗр етем пычӗ. Пӗр предприйатийе укҫа-тенкӗ ӗҫӗпе ҫыхӑнакан вырӑна кӗмешкӗн манран рекомендаци ыйтат̆.

— Сӑмаха тӳрӗ каласа хунӑшӑн каҫар-ха та есӗ мана,—терӗм ӑна епӗ.—Сана пӗлместӗп-ҫке, палласах каймастӑп.

Чӑнахах ӗнтӗ—йут ҫын. Пит-куҫӗнчен пӑхсан та шанчӑклӑ етемех марри сисӗнет.

— Пултараймастӑп, йулташ! Епӗ сана качапӳрни пысӑкӗш те пӗлместӗп!

Тепӗр кунтан хӗрарӑм сасси йанрани хӑлхана кӗрсе карӗ.

— Кӗме йурат̆-ши?—тет сасӑ.

— Йурат̆,—терӗм ҫи-пуҫа йусакаласа.

Кӗрет. Платийӗ шап-шурӑ, ҫанӑсӑр. Ҫӳҫне каснӑ. Куҫӗсемпе шӑлӗсем темӗскерле илӗртӳлӗн ҫиҫеҫҫӗ.

— Есӗр пулатӑр-и-ха, Славин?—терӗ кӗнӗ-кӗменех хӗрарӑм.

— Епӗ!—терӗм.

— Мӗншӗн-ха?..—каласа пӗтермесӗр куҫӗсене айалала йачӗ.

— Мӗн?

— Мӗншӗн-ха сирӗн пит-куҫ...

— Ну?

— Мӗншӗн пит-куҫран пӑхсан есӗр кӑмӑллӑ ҫынӑн курӑнатӑр. Тӗрӗссипе илсен есӗр усал ҫын.

Вӑл сӑмаха ҫапла тӳрех персе йанинчен епӗ чӑнахах тӗлӗнтӗм:

— Сире епӗ усалли ҫинчен кам каласа панӑ-ши?

— Хамах пӗлетӗп. Есӗр ман упӑшкана отказ панӑ...

— Мӗн тӗлӗшпе отказ?

Ҫӳхе тутисене тӑсрӗ, куҫӗсене ачаш ачанни пек йалкӑштарчӗ.

Епӗ унӑн упӑшкине мӗнле йышӑннине аса илтӗм те, ӑшшӑн кулнӑ пек турӑм. Хӗрарӑмӗ хӑй ҫав тери илемлӗскер, йуратмаласкер.

— Сирӗн упӑшкуна пӗлместӗп-ҫке?

— Есӗр мана та пӗлместӗр,—пулчӗ ответ.

— Сире те пӗлмен ҫӗртен рекомендаци парас ҫук.

Пит-куҫӗ тӑрӑх вӑл питӗ хытӑ тӗлӗнсе кайни палӑрчӗ.

— Мана та? Памӑр-и вара? Мыскара тӑватӑр! Ун пек пулма пултараймаст̆.

Тепӗр кунтан унӑн йачӗ Маруҫӑ иккенне пӗлтӗм. Тата икӗ кунтан епӗ ӑна хӑйӗн хватерне ҫитичч-н ӑсатса, упӑшки патне илсе пытӑм. Упӑшки уншӑн мана тав турӗ.

Тата виҫӗ кунтан мана Маруҫӑ ҫапла カларӗ:

— Итле-ха, арланӑм! Есӗ ҫырма пӗлетӗн вӗт. Пӗлетӗн пулсан, ҫав пустуй рекомендацине ҫырса пар ӗнтӗ. Ҫав айван хутшӑнах вӗт ӗҫе кӗмесӗр пурӑнат̆ упӑшкам. Арланӑм! Есӗ ман пӑн кӑмӑлл ı ҫын. Сана епӗ усал ҫын тесе шухӑшланӑччӗ.

Упӑшки ман пата иккӗмӗш хут килнӗ вӑхӑтра епӗ Маруҫӑна ӗмӗрех пӗлсе пурӑннӑ пекех туйӑнса карӗ. Упӑшки кӑмӑла каймаст̆, анчах вӑл Маруҫӑна качча илнине аса илсе. . вӑл тӳрӗ етем пек туйӑнчӗ... Пӗр сӑмахпа каласан, епӗ ӑна ыйтнӑ рекомендацийе патӑм. Памасан лайӑх мар пек туйӑнчӗ.

— Вара? Ӗҫе мӗнпе пӗтрӗ?

— Мӗнпе пӗтрӗ? Акӑ пӑх!..

Славин ман куҫ умне хаҫат илсе пырса:

— Вула—„Пысӑк растратӑ“ тесе йат панӑ стат̆йа. Ав унта хаҫатӑн сылтӑм йенчи колонкинче.

Епӗ вуласа тухрӑм.

— Ҫырӑр,—терӗ Славин.—Ун пекки ман па ҫеҫ мар, ыттисем е те пулма пултарат̆. Ҫапла вӗт. Стат̆йин вӗҫӗнче вулакансене пӗлме ҫакӑн пек вӗрентсе ҫырӑр: „Ҫын мӗнлине тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлмесӗр рекомендаци ан парӑр“ тейӗр. Килӗшетӗн-и?

Епӗ ҫав историйе хам мӗнле илтнӗ, ҫавӑн пек каласа патӑм. Вӗрентсе калама хушнине ҫырмарӑм. Ҫырмасан та паллӑ.

**В. Ав-в.**

# ШУХӐША ИЛМЕСӖР

Ларйокра сутӑнакан таварсем ҫине пӑхкаласа тӑнӑ хыҫҫӑн, прилавкӑ ҫинче выртакан кӑлбасийе пӳрнепе тӗртсех пӑхрӑм. Шултӑра, патмар шӑнасем ларма хӑнӑхса ҫитнӗ вырӑнтан, пасар чӑкӑчӗ ҫине куҫа-куҫа ларчӗҫ.

— Ку мӗн вӑл?—тесе ыйтрӑм епӗ приказчикрен.

— Вӑл-и, кӑлбаси,—терӗ ӑшӑ кӑмӑллӑн приказчик,—кӳрсе килни нумай пулмаст̆, питӗ паха тавар.

— Ҫук, епӗ ун ҫинчен мар... Мӗн чухлӗ шӑна кунта.

— Шӑнасем, чӑнахах ӗнтӗ, аптратаҫҫӗ,—килӗшрӗ манпа приказчик.—Шӑни нумай. Ун йышши хурт-кӑпшанкӑ тӗнчере мӗн тума пурӑнат̆-ши. Ни илемӗ ҫук, ни савӑнӑҫӗ ҫук вӗсенчен... Ну, мӗн, турттарса парас-и?

— Мӗн?

— Кӑлбасине. Аван кӑлбаси. Пайан анчах кӳрсе килнӗ.

— Ҫук, вӑл мар-ха... Шӑна нумай сирӗн. Ку аван мар.

— Шӑнара мӗн аванни пур ӗнтӗ. Урӑх тавар, йе кӑлбасси илетӗн-и?

— Шăтăклă пирпе витсе хумала пулнă.

— Ма шăтăклă пирпе. Тимĕр-тăмăртан йатарласа тунă çеткă та пур: тавар илекене ун витĕр таварĕ те курăнать, шăнасем те ун витĕр кĕрейместçĕ. Çитес кунсенче Чăвашсойузран циркуђар килессе кĕтетпĕр. Циркуђар килсен, паллах, унта каланисене пурнăçлас тесе, çимели таварсене витсех усрама тытăнăпăр. Ну, мĕнле турттарса парас-и?

— Халĕ мĕншĕн витместĕр?

— Калатăпçке-ха: циркуђар килмен. Ытти илекенсене ан тытса тăр ĕнтĕ, гражданин, йе туйан, йе...

— Шăнасем циркуђар килессе кĕтмеççĕ вĕт.

— Ав вăл шăнаран мĕн кĕтет. Шăна шухăша илме пĕлеймест: ăçта вĕçес килет, çавăнта вĕçет. Ан тытса тăр-ха, мĕн илме килнĕ, çавна ил те кай...

— Шăна урлă тĕрлĕ йышши чир-чĕр йерет. Шăнасем циркуђар килессе кĕтмеççĕ, йĕрекен чир-чĕр микробĕсене циркуђар килессе кĕтмесĕрех сараççĕ...

— Есĕ тата шăнана циркуђар тăрăх пурăнтарасшăн-и,—терĕ мана хирĕç тĕкĕлтетсе приказчик. —Ун йышши жалăбăсемпе есĕ шăна патне кай, пирĕн ĕç мар вăл, гражданин!..

Кайала мĕн чухлĕ таварса панине шутласа тăракан старик те мана хирĕç сăмах хушрĕ:

— Темĕн те шухăшласа кăларĕç: шăна вађђи циркуђар çыртарасшăн! Тен, есĕр шăнасене анкетăсем тултарма та хушăр,—терĕ.

Епĕ тухмали алăк патнеле утрăм. Манăн çурăм хыçăнче приказчик тарăхса сурнă сасă илтĕнчĕ.

— Çӳрет ĕçсĕр аптраса. Мĕншĕн пуçпа шухăшласа илме пултараймаççĕ-ха ун пеккисем. Пулаççĕ етемсем!—терĕ епĕ алăкран тухса кайнине кура.

*Н. Крышкин.*

---



— Шкул директăрĕ Соколов ман пата вырăсла, пасара каймашкăн велоçипед ыйтса, хут çырнă. Хучĕ çинче пĕтĕмпе 14 йăнăш. Райçутпайĕнчисем ăна, тĕрĕс çырать тесе, мухтаççĕ. Мĕн пирки вăл çавăн пек йăнăш нумай тунă?

— Вăл çырнине кирек хăçан та тӳрлетсе пыракан Иванăвă отпуска кайнăран.




## ГРАМАТИКĂ УРОКĔНЧЕ

— Акă кунта епĕ „мĕншĕн“ сăмах çыртăм. Павлăв, кала-ха: мĕнле сăмах ушкăнне кĕрет çав епĕ çырнă „мĕншĕн“ сăмах?

— Вăл-и? „Есĕ, учитĕл, мĕншĕн заңатийе вăхăтра çӳреместĕн“ тенĕ чухне кирлĕ сăмах ушкăнне кĕрет.




## МАЛТАН ШУХĂШЛАМАН

— Ăçта чупан?

— Пушар тухнă. Çуртăм çунать Çунса пĕтиччен хăвăртрах ирĕклĕн страхласа йулас, тетĕп.



— Есĕ хулана Чăвашпединçтитута кĕрес шухăшпа килнĕ. Екзамĕн тытма ма каймарăн?—Екзамĕн тытас шухăша пăрахрăм!—Ма?—Ара унта екзамĕнта вырăс чĕлхипе сочинени çыртараççĕ.

# ВАТКĂ

*М. ДАНГЕР.*

Манăн арăм ирхине, çичĕ километăрта ларакан Йетĕрне хулине карĕ те, хĕвел каçалана сулăнсан пĕр çĕклем ваткă çĕклесе таврăнчĕ. Хăй йĕп-йĕпе тарланă; çиййĕнчи кĕпи шыва чиксе кăларнă пекех...

— Мĕн тăватăн-ха кун чухлĕ ваткăпа?—тетĕп.— Хаҫ пире ваткă ним тума та кирлĕ мар-çке. Ни тумтир çĕлетес çук, ни ваткăлă ăшă одейал тăвас çук. Мĕн тума кирлĕ-ха?

—Кирлĕ мартан илмеççĕ йапалана,—тет манăн Лизă,—кирлĕшĕн илнĕ те. Ваткă тумтир çĕлетме çеç кирлĕ тетĕн-им есĕ. Тумтир тума çеç мар, урăх çĕре те кирлĕ.

— Кайсам,—тетĕп,—ан лĕпĕртет кирлĕ мара! Ваткă тумтир тунă çĕре çеç кирлĕ пулмасăр, урăх ăçта кирлĕ пултăр-ха тата?—кулса йатăм епĕ хамăн арăмран.

— Хаҫ ахăрса, кулса ларатăн та-ха, кайран хăвнах кирлĕ пулĕ-ха,—терĕ те ман арăм, хуларан илсе килнĕ шап-шурă ваткине тутăрпа чĕркесе хучĕ.

Каçхи апат çикелесен, сывăрма выртас умĕн пăсăрхи ваткăна вырăн çине çĕклесе пычĕ те хăйĕн хăлхи шăтăкĕсене ваткăпа питĕрме пуçларĕ.

— Мĕн ухмахланатăн, Лизă,—тетĕп,—хăлхусене ма ваткă тултаратăн? Ухмаха йерсе каймарăн пулĕ-çке есĕ! Хăлхана тараккан кĕресрен тес, пирĕн тараккан та çук-çке.

Арăм ман сăмаха хăлхана та чикмест, ман сăмахсене хăлхана чикес вырăнне, хăлхисене ваткă чиксе тултарать. Ăçта унта ман сăмахсем кĕрсе вырнаçчăр-ха? Ман сăмахсем кĕрсе вырнаçмалăх вырăн та йулман унта, пĕтĕмĕшпех ваткă... Хăйĕн хăлхисене питĕрсен, ман хăлха шăтăкĕсене те ваткăпа питĕрме пуçларĕ. Аран-аран пуçа айаккала пăрса илсе:

— Мĕн хăтланатăн ухмах, Лизă,—тетĕп,—нихăçан та капла хăтланман-çке, кĕçĕр мĕн ухмахла хăтланатăн! Хăвăн хăлхусене питĕрни те çитĕ-çке, ман хăлхасене питĕрмесĕр хăвар ентĕ. Чипер, таса хăлхана ма питĕрес, ни йухмасть, ни ыратмасть...

— Кĕçĕр Урапакассинчи йурлакансем килмеле, тет. Вĕсен йурри ан илтĕнтĕр тетĕп-çке,—тет ман арăм.

— Килсе йурласа параççĕ пулсан аван. Апла пулсан пирĕн йалти пек, тĕттĕме йулнă ачасем мар, çутта тухнă культурлăрах ачасем.

— Ава-ан,—терĕ ман арăм, сăмаххине тăсарах,—аван мар тет çав! Питĕр хăлхуна!

Вăл мана каллех хăлхасене питĕртересшĕн çунать. Пĕр ывçă ваткă татса илчĕ те, чăмăртаса ман йеннеле ывăтрĕ. Епĕ вăл ваткăна илсе, хамăн пуç вĕçне хутăм. Арăм темĕн чухлĕ питĕрме йăлăнсан та, питĕрмерĕм.

Акă ентĕ, йал вĕçĕнче, хуткупăссемпе частушкăсем йурлани илтĕнме те пуçларĕ. Урапакассинчи йурлакансем килеççĕ пулас. Епĕ хавасланса кĕтсе выртатăп. Çĕнĕ йурăсем йурланине илтес килет манăн. Хуллен-хуллен, майĕпе, пирĕн тĕле те çитрĕç. Пирĕн тĕле çитсенех, вырăс чĕлхипе те мар, чăваш чĕлхипех мĕн пур-çук вăйĕсемпе, ушкăнĕпе пĕр харăс, амĕш сăмаххисене асăнса, хĕрсенчен тăрăхласа кулса, хĕрарăмсене вăтантармали частушкăсене кăшкăрса йурласа йачĕç. Кун пек намăслă частушкăна итлеме те пите кĕçе çĕлесе итлемеле. Аран-аран, пăсăр арăм ывăтса панă ваткăна шырасан тупса, хăлхана персе чиксе лартрăм. Апла та чарма çук, таçтан мурĕнчен, пĕрмайах ман хăлхана намăслă сăмахсем пыра-пыра кĕреççĕ, ваткă та чараймасть...

Арăм, еп хăлхана ваткă тултарнине сисрĕ пулмала, манран каçса кайсах кулма пуçларĕ.

— Хи-хи-хи! Ăнланатăн-и хаҫ ваткă мĕн тума кирлине! Хи-хи-хи!—тет.

Ман арăма хирĕç нимĕн те чĕнмеле пулмарĕ, мĕншĕн тесен хам пăсăр култăм.

Чăтайманнипе, хăлхана питĕрнипех, урама чупса тухрăм. Пăхатăп та, чăнахах та Урапакасси ачисем: Ватраскин Леонти, Сандимиркин Флегăнт, Серебрйаков Николай, Удейкин Алексей, Иадровкин Николай (Çĕрпӳ педтехникумĕнче вĕренекен студент), Козлов Арсенти. Татах та нумайăнччĕ те, каçхине çĕр тĕттĕм пулнă пирки, пурне те паллаймарăм. Çăварĕсене курак вĕçсе кĕмелĕх карса пăрахсах, çухăраççĕ. Вĕсен çăварĕсенчен ытла та илемсĕр, хулиганла сăмахсем тухаççĕ. Сире сăмаххисенех çырса парăттăмччĕ, анчах та, ман ун пек сăмахсене хут çине çырма ал çĕкленмест.

— Йатă пичĕсем!—терĕм,—мĕн тесе çакăн пек хулиганла йурăсене йурлаттăр. Кун пек йурăсене йурлама питӳсене кĕçе çĕлес пулать!

— Ничево,—терĕç Урапакасси çамрăкĕсем,— хаҫ каç. Тĕттĕм. Питсене кĕçе çĕлемесен те никам та паллайас çук пире.

Йатларăм Урапакассинчи çамрăксене. Йатланă пирки, тепĕр каçĕнче, йурийех ман чӳрече умне пырса манран мăшкăласа йурларĕç. Тепĕр каçĕнче, ман чӳрече умĕнче йурлама, Серебрйаковпа Йадровкинĕ çеç пыман, ыттисем пурте пур. Мĕн тăвас тетĕн-ха намăса пĕлмен çынсемпе. Йурлаççĕ те, йурлаççĕ. Йăлăхтарчĕç ентĕ вĕсем пире хăйсен илемсĕр йуррисемпе! Епĕ хаҫ кашни каçах хăлхана ваткăпа питĕрсе выртатăп.

Малашне çаплах урам хушшинче йурласа çӳреме ирĕк парас мар вăл хулигансене. „Капкăн" страници çине туртса кĕртсе, унта йурласа пăхчăр тата!

Епĕр вĕсен йуррисене итлесе „савăнтăмăр". Çитĕ! Малашне Иетĕрне районĕнчи прокурорпа милици тытăмĕ итлесе пăхĕç.

---

## Бригадир ĕçлемен пирки

— Тулă кĕлти çыхакансене сĕлĕ кĕлти çыхма хушаканĕ бригадир пулчĕ-и мĕн?

— Çук, бригадир арăмĕн йăмăкĕ, „унта пымасан ĕçкунĕ партармастăп", тесе кăшкăраканĕ счетовод арăмĕ. Кам пуррине тĕрĕслекенни звенйевойăн пиччĕшĕ.

**Силингер**




— Пирĕн сăнăмăрсене мĕн тума ÿкеретĕн-ха?
— Есĕр, йалти турăсăрсем, мĕнле ĕçлесе пурăннине Вăрçăлă турăсăрсен райсовечĕ пĕлесшĕн. Хăйĕн килсе çÿреме вăхăчĕ çук. Çавăнпа ÿкерсе пыма хушрĕç.




## Йĕр

Лап-лап çерем, лап çерем, лап çеремрен шыв йухать, йĕрне йĕрлес терĕм те, тарăн куракă тĕпĕнче,—тенĕ чăвашсен авалхи йурринче.

Пушнарти (Йетĕрне районĕ) Мичурин йачĕпе тăракан колхозăн тĕп çитменлĕхĕ мĕнрен пулса пынине пĕлме йĕр йĕрлесе пăхсан, йĕрĕ колхоз председателĕ Димитрийĕв çыварса пуранна вырăна пырать. Вăл вырăна çитсен, Сунгари пĕлтернĕ тăрăх, çапла калаçнине илтме пулать:

—Ех, кума Палати! Есĕ ман кума мар пулнă пулсан, санра тăракан 900 тенкĕ укçана тахçанах колхоз вађђи шыраса илмеле те!

— Здорнăв йулташ, епĕр ĕлĕк питĕ аван пураннине аса илсе, санран илме тивĕçлĕ 800 тенкĕ укçана колхоза вађђи илес мар, тетĕп.

— Çпиридонăв йулташ, пĕркунне колхозниксем сана, 1500 тенкĕлĕх аша çĕртсе йанăшăн тӳлетерес, терĕçи-ха? Çавна хамăр хушăра тӳлемеле мар тавас, терĕмĕр. Сыснасем вађђи панă посыпкăсене, ыраш çăнăхне килте çынсене сутнине те хамăр хушăрах сӳрĕлтерсе йарăпăр.

— Йарсолăвă Ваçилисă, есĕ паранкă вăрланине, колхоз утă уламне Йанăма ăсатнине никама та пĕлтермесĕрех çухатăпăр.

— Мари Йаковлĕвă, леш колхозăнне 1 лав утă вăрланине те ахалех, сут тумасăрах, ирттерсе йарăпăр.

Йĕрне тупрăмăр, йĕрĕ епĕр асăнна çĕрте пĕтет пек. Анчах тĕплĕнрех йĕрлесен халăх сучĕ патне илсе кайасси паларать.

## Палăрать

Хуђăм хĕрĕ, хура хĕрĕ тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвĕ, тенĕ.

Йетĕрне районĕнчи Вађкинă йалĕнчи Илле Çеменне кайнă хĕр тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тума пултараймасть, вăрă тума çеç пултарать: Илле Сентӳкĕнне 2 кĕпе, халат, кăçатă тата нумай йапаласем илсе тухнă; Карачăм Иванĕн арăмĕнне 2 вĕрçĕнĕ пасар кĕпи чиксе тухнă.

Упăшки те, арăмĕнчен йулас мар шухăшпа, колхоз арманче мелникре чухне, 20 пăт ытла армантан тырă „çухатнă“.

Вăрă çынăн çĕлĕкĕ çунать, теççĕ. Илле Çеменĕпе арăмĕ çулахи вăхăтра çĕлĕк тăхăнмаççĕ, çавăнпа çĕлĕкĕсем çунни палăрмасть, халăх сучĕ пригăвăр йышăнса парасси паларать.

## Ма шăмарнă

Епĕр Канашпа Шупашкар хушшинчи чукун çула тăвакансем патĕнче, Вăтакас Татмăш (Канаш р.) колхоз бригади ĕçленĕ участкăра пултăмăр. Чул тийенĕ урапапа пыракан лаша, пуш урапа айне сулхăна кĕрсе выртнă Арлан Елекçейĕ бригадир патĕнчен иртсе кайнă чухне, шăмарса илчĕ. Кайран, колхозниксенчен ыйтсан, лаша мĕншĕн шăмарнине пĕлтĕмĕр:

— Арлан Елекçейĕ чукун çул çинче ĕçлекен лашасене вађђи панă 16 килограм сĕлле ерех туса ĕçнĕ. Çавна сиссех ăна лаша шăмарнă,—терĕç колхозниксем.

## Курак

Чăхă та ĕçет. Анчах виçине пĕлет. Хăшпĕр граждăнсем пирки ун пек калама пултараймастпăр. Вĕсем виçе тĕлĕшĕпе хăйсен чунĕ çине шанаççĕ. „Чун хăйĕн виçине пĕлет“, теççĕ. Анчах етемĕн чун çуккине наукă аван кăтартса панă. Çавăнпа нумайĕшĕн çук чун çине шанса ĕçни виçерен тухса кайать.

Елĕк районĕнчи Кураккассинчи колхоз председателĕ Петр Димитрийĕва хăшпĕр колхозниксем сума суса, „ĕçкĕ ашшĕ“ тесе йат панă, мĕншĕн тесен унăн ĕçки виçерен туха-туха пырать. Ытти ĕçĕсем те унăн йĕркерен туха-туха пыраççĕ: кăçал колхоз укçине пӳрт лартма 700 тенкĕ илнĕ, вăрманта ĕçленĕшĕн колхозниксене тухнă 210 тенкĕ укçана хăйĕн аллине илнĕ. Кооперативра çăмартала сутăнакан мануфактурăна та вăл çăмарта памасăрах илнĕ т. ыт. те.

Мĕскĕн Димитрийĕв, кăçал вăл мĕн тери вăйлă улшăннă, пăхсан колхоз председателĕ пек курăнмасть, темĕскерле тӳрĕ мар шухăшлă етем пек курăнать.

## Тăм илнĕ

Туçи Çармăс йалсовет председателĕ П. Степанăв пĕрмайах ĕçет. Усĕрпе питне-куçне çĕмĕрсе пĕтернĕ. Йалсовет Шăхасан районĕнче чи кайра пыраканни.

— Пеđа, авă çав çынăн питне мĕн пулнă-ши ăна? Бинтăпалах çыхса лартнă.

— Тăм илнĕ.

— Кай, ан тĕлĕнтерех! Çу кунĕнче те тăм илет-и вара?

— Илет çав. Çимĕк прaçниккинче 40 градуслă „сивĕпе“ самайах тăм илсе йанă.

**Ник. Йанкеш.**



## ТĔН СĔРĔМĔНЧЕН ТУХНĂ АЧАÇЕМ

*Вĕрентекен:*—Акă халĕ есĕ Пушкин поет çырнă сăвва вуларăн. Унта çакăн пек каланă вырăн пур: „ултă çунатлă çерафим çул йуппинче ман курăнчĕ“, тенĕ. Кала-ха, пĕлетĕн-и: мĕн вăл „çерафим“?

*Вĕренекен:*—Пĕлетĕп-çке!

*Вĕрентекен:*—Пĕлетĕн пулсан, кала!

*Вĕренекен:*—Çерафим-и? Кам пĕлмест ăна – Çерафим Знаменскийе... хытă чупас тĕлĕшпе тĕнчере чи малти вырăна йышăннă çынна.

---

# П ă р у

(*Йуптару*)

Пур çынсемшĕн те ку паллă ĕнтĕ:
Çак пăру пулнă пит те айван:
Çуратан амăшне — ĕнене те
Палласа илме пултарайман.
Кил хуçийĕ ăна ĕмĕртмешкĕн
Йарасшăн пулнă амăшĕ патне.
Утман пăру, çиме пĕлмен вăл, мĕскĕн,
Хăйĕн пĕртен пĕр тутлă апатне.

* * *

Колхоз тулашĕнчи хресченсене
Çак пăрупа танаштарсан аван:
Телелейлĕ, тутă пурнăç ăçтине
Вĕсем çаплах вĕт-ха ăнланайман.

Ванин Ф.

---

## Икĕпитлĕ етем

— Мĕн есĕ ĕнер каç çывăрма выртас умĕн пĕр май „ей турă, каçар мана çылăхлă çынна, каçарсам, турă“, тесе пăшăлтатрăн?

— Çур сехет хушши хама хам критиклерĕм, самокритикă туса иртертĕм.



## БЎРОКРАТ ОТВЕЧĔ

—Канаш—Шупашкар чукун çул строителствине пулăшассине есĕр калаçкаланипех иртерсе йарасшăн пулмала.

—Çук, çук! Тĕрĕс мар. Калаçкаланипе кăна мар... йышăннă резоЉуцисем те пур.

# УЛШӐНМАН

Утилсырйо пухакан ыйтрӗ:

— Кил-ҫуртра кирлӗ мара тухнӑ йапаласем пур-ши, тесе килтӗм те.

Крахйан карчӑк, шухӑшласа пӑхнӑ хыҫҫӑн, каларӗ:

—Пур!—терӗ.

Виҫӗ кив калуш, тусанланса кайнӑ бутылкӑсем илсе тухрӗ.

Утилсырйо пухакан илсе тухнӑ таваршӑн укҫа кӑларса тӳлерӗ те, татах ыйтрӗ:

— Кӗпе-йӗм, картуз, пиншак, тӑла пур-и?

— Пур!—терӗ те Крахйан карчӑк, кивӗ кӑвак брӳки йӑтса тухрӗ.

Утиљсырйо пухакан, укҫа тӳлесен, илнӗ таварсене михӗ ӑшне чикрӗ те, ҫурӑм ҫине хурса малала карӗ.

Каҫхине, ачи ӗҫрен таврӑнсан, Крахйан утилсырйо пухакан килни ҫинчен каласа пачӗ.

— Утилсырйо пухакана брӳкуна, тата виҫӗ калуш, бутылкӑсем парса йатӑм. Пӑрахмаласкерсем. Пустуй вырӑн йышӑнса выртаҫҫӗ. Панӑшӑн укҫа пачӗ.

— Хӑш брӳкине патӑн?

— Ҫӗннине мар ӗнтӗ, кӑваккине, киввине!

— Кӑсйинчен нимӗн те кӑлармарӑн-и?

— Кӑларман. Ма вара?

— Унта комсомол комитечӗ ӗҫӗсем ҫинчен ҫырнӑ отчот пурччӗ. Мӗн туса хутӑн-ха апла!

— Еп айапли? Епӗ пӗлмен. Урӑх вырӑна хумала пулнӑ ӑна.

— Хамсӑр ман йапаласене ан тӗкӗн, тесе сана епӗ миҫе хут каланӑ-ши. Ӗнтӗ отчота ҫӗнӗрен ҫырас пулаӗ.

— Отчотне хӑҫан ваљљи ҫырмала?

— Виҫмине.

Тепӗр кунне Крахйан карчӑк хапха умне тухса тӑрса, утилсырйо пухакан ӑнсӑртран иртсе кайасса кӗтнӗ. Кӗтсе илеймен.

* * *

Ҫулталӑк иртнӗ. Уйар кун утилсырйо пухакан пынӑ.

— Упӑр-тапӑрсем пур-и?

Кулине карчӑк кив ботинкӑ, пӗр мӑшӑр калуш йӑтса тухнӑ. Утилсырйо пухакан укҫа кӑларса тӳленӗ, илнӗ йапаласене михе чикнӗ.

— Кив пиншак, кив брӳки, кив ҫӗлӗк пур-и? тенӗ татах Крахйан карчӑк куҫӗнчен пӑхса.

— Пур,—тенӗ Крахйан карчӑк.

Кивӗ пиншак йӑтса тухнӑ. Утилсырйо пухакана парас умӗн Крахйан карчӑк, пиншак кӑсйисене, мӗн те пулин кирлӗ хут тавраш ҫук-ши тесе, пӗтӗмпех ухтарса тухнӑ. Аллине шӑтӑк кӑсйене чиксе йанӑ хыҫҫӑн, кӗсйе тӗпӗнчен темӗскерле хут туртса кӑларнӑ. Пӑхнӑ та тӗлӗнсе хытсах кайнӑ. Кӑсйе тӗпӗнчен туртса кӑларнӑ хут—комсомол комитечӗн отчочӗ пулнӑ.

Каҫхине, ывӑлӗ ӗҫрен таврӑнсан, Крахйан карчӑк ӑна утилсырйо пухакан килни ҫинчен каласа панӑ.

— Астӑватӑн-и, пӗлтӗр брӳкуна сутса йанине? Комитет отчочӗ ун чухне парса йанӑ брӳки кӑсйинче тесе, есӗ ман ҫине ҫиленнӗччӗ. Отчот вӑл брӳкӑ кӗсйинче пулман. Кив пиншак кӗсйинче пулнӑ. Ахалех кӳреннӗ...

17 ҫулхи ачи хӗпӗртенӗ:

— Ах лайӑх пулчӗ! Спаҫибӑ сана! Хаљ анчах еп отчот ҫырма ларас, тенӗччӗ-ха! Апла пулсан ҫырса аппаланма кирлӗ мар:—ҫулне тата числисене улӑштаратӑп та отчот пулаӗ те. Ӗҫсем пӗлтӗрхинчен улшӑнман,—тенӗ.

* * *

Утилсырйо пухакан тата Крахйан карчӑкпа ачи ҫинчен хам пуҫран шухӑшласа ҫыртӑм. Ӗҫӗ, тӗрӗссипе, акӑ ҫапла пулнӑ: 1935-мӗш ҫулхи декабӗрте „Канаш" редакци Какаҫ йалӗнчи (Елӗк районӗ) комсомолӑн пуҫламӗш организаци ним те ӗҫлеменни, пухусем, политзањатисем пӗре те туманни ҫинчен ҫырнӑ заметкӑна Елӗк райкомолне тӗрӗслеме йанӑ.

Тӗрӗслеме йани икӗ ҫула кайни икӗ уйӑх иртсен кӑна вӑл заметка райкомол инструктӑрӗ Лебедӗв Й. тӗрӗсленӗ. „Канаш" редакцине „фактсене тӗрӗслени" ҫинчен йанӑ хут ҫине: „Комсомол организаци пӗлтӗрхинчен начар ӗҫлет тени те тата ытти фактсем те тӗрӗс", тесе ҫырса пӗлтернӗ. Ӗҫсем улшӑнман. Есӗр Какаҫ организацинче те ӗҫсем, ытти организацисенчи пекех, улшӑннӑ пулӗ, тетӗр. Улӑшӑнман ҫав, йӑнӑшатӑр! Ҫавӑнпа та отчотра пӗлтӗрхи ҫведӗнисемех кӑҫал та пулма пултарнӑ. **И. М.**

---

## „Американкӑра"

Шупашкарти „американкӑсенче" пӗчӗк ачасене те сӑра сутаҫҫӗ.

**Пынӑ ҫын:**—Буфетчик, сӑра пӗчӗк ачасене сутма йурамасӗ. Ма сутан? Ачасене ӗҫме вӗрентен!

**Пӗр ачи:** Ӗҫме? Епӗр ӗҫме килнӗ тетӗн-и? Ӗҫме мар, мухмӑр чӗртме килнӗ.

---




Хӗвел патне пынӑ отношени.

# Кулас Килет



### Пасарта

— Ку кашӑксем сирӗн ма йака мар? Ҫӑвара хыпсан тутана ҫурса пӑрахӗҫ.

— Ма тиркен! Вӑл кашӑксем—Шупашкартан кӳнӗскерсем.

— Хӑвӑр ертел туни мар-и?

— Хамӑрӑн ертел туниех те. Шупашкарта Промсойузра йышӑнман та, кайала кӳрсе килнӗ.

### Фабзавместкомсен суйлавӗсем умӗн

— Пирӗн Ваҫкӑ кӗнекесене тирпейлӗ тытнинчен пит тӗлӗнмеле.

— Тирпейлӗ тытни ӑҫтан паллӑ?

— Профсойуз кӗнеки унӑн таптаса. Член укҫи тӳленине паллӑ туни те ҫук.

### „Ҫемйе“ ҫынни

— Машӑ, санӑн упӑшкуна профсойузран мӗншӗн кӑларса пӑрахнӑ?

— Ах, тӑхлачӑм, ан та ыйтах? Каласан та ӗненмӗн: хӑйӗн тӑван ҫемйине йуратнӑ пирки кӑна ҫавӑн пек турӗҫ ӑна.

— Мӗнле апла?

— Ҫапла ҫав: вӑл, манӑн Петрушӑ, хӑй ҫемйине йуратаҫ—ҫемйе валӡи шоколад, канфет илме укҫа нумайрах йултӑр тесе, пӗлтӗрхи ҫентабӗртен пуҫласа ийуӆ уйӑхчен взнос тӳлемен.

### Пӳрне

— Сирӗн ревизи комиҫҫи хӑйҫе тума хушнӑ ӗҫ ҫине пӳрне витӗр кӑна пӑхнӑ. Местком суйлавӗ ыран, местком ӗҫӗсене ревизи туса пӗре те пӑхман.

— Пӳрне витӗр? Ҫук, апла пулма пултараймасҭ. Пӳрне витӗр пӑхма пултарайман.

— Ма.

— Ма? Ара вӑл кирек хӑҫан та аллисене лаш йарса ларнӑ. Алӑсене лаш йарса ларнӑ вӑхӑтра пӳрне витӗр пӑхма ҫук ӗнтӗ.

### Ӗҫсем йапӑх вырӑнта

— Иван Павлович, епӗ ыйӑх килменнипе аптрама тытӑнтӑм. Вӑл йапаларан хӑтӑлма мӗнле пулӗ-ши?

— Ӑйӑх килменрен хӑтӑлма-и? Ӑйӑх килменрен хӑтӑлма хӑвӑрӑн учрежденири физкуӆткружока йе РОКК йачейкине кӗр. Вӗсем кирек хӑш вӑхӑтра та ҫывӑраҫҫӗ.

### Заҫеданире тухакан йӑвӑрлӑхсенчен хӑтӑлмали ҫӑмӑл май

— Испанин шалти ӗҫне хутшӑнмала мар тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен Лондӑнри комиҫҫи ларӑвӗ каллех уҫӑлнӑччӗ. Мӗн йышӑннӑ ҫавӑнта?

— Перерыв тума йышӑннӑ.

### Гитлӗр ҫыннисем Парижри выстӑвкӑра

— Ку италйанцӑсен павилйонӗ питӗ аван, питӗ илемлӗҫке!

— Тӑхта-ха, ара вӑл павилйон италйанцӑсен мар, Совет Сойузӗн-ҫке!

— Совет Сойузӗн?! Ну?!. Тоттӑ илемлех мар. Малтанах: ку илемсӗр павилйона мӗнле тума пӗлнӗ, тесе шухӑшларӑм.

### Ҫул йусанӑ хыҫҫӑн

— Пирӗн йалтан хулана ҫитиччен километр шучӗсене чакарнӑ имӗш.

— Мӗнле апла?

— Ҫаплах: грузовик хулана ӗлӗк 2 сехетре ҫитеччӗ, халӗ сехет ҫурӑ кайаҭ.

### Клаҫҫиксен типӗсене пӗлмен куӆтработник

— Куӆтработник йулташ! Ӑҫта васкан?

— Библиотека. Ӗнер пухура пӗри мана „Держиморда“ терӗ,—мӗн тени пулнине пӗлме кайатӑп.

---

## МАНӐН ҪЫРУ

Ах, чунӑм, Никандр! Санпа паллашмасан кампа паллашас? Есӗ вӗт Ишлей районӗнчен, Шинер Тӑрӑн йалӗсем. Есӗ, вӗт, учитӗл, хӑв каланӑ тӑрӑх, „вунпӗр ҫул хушши шкулта ӗҫлесе тӑватҫӗр утмӑл ҫын вӗрентсе кӑлараканскер“.

Ах, Никандр! Пултаратӑн, ху пултараймастӑн пулсан та, ручкӑпа кӑранташ тытакан пӳрнӳсем пултараҫҫех. Тав ту есӗ хӑвӑн пӳрнӳсене. Есӗ вӗсем пулӑшнипе, хӑвна ху мухтаса, преми те, грамӑтӑ та илме пултармала.

Санӑн пуҫтӳпийӗ те шӑтӑк мар. Мимери шухӑшусем ҫилпе вӗҫсе сапаланса пӗтмеҫҫӗ. Пуҫӑнти мимӳсем, чейе ҫынӑнни пек ӗҫленипех, есӗ хӑвна чапа кӑларма шут тытнӑ. Шут тытнӑ та шурӑ хут илсе „Никифӑрӑв Никандра Ленин ордӗнӗ памалах“,—тесе ху йалан ҫырниччен улӑштарса, ху вӗрентсе кӑларнӑ ҫынсен йачӗпе кӑранташпа, чернилпа улӑштара-улӑштара алӑ пуснӑ хута редакцине йанӑ.

Ах, Никандр! Мӗн тери нумай хушамат

çырса хунă есĕ хăвăн аллупах. Пултаратăн, пултармасť темеле мар. Пултарман çыл:— „Сывă пултăр пире тĕттĕмлĕхрен кăларакан совет правительствипе большевиксен партийĕ тата хамăра вĕрентекен учитĕл Никифăрăв Никандр! Никифăрăв Никандра Ленин орденĕ парма „Канаш“ хаçат урлă пĕлтеретпĕр“,— тесе çырма мĕнле пултартăн.

Пултаран, пултаран! Пултарнă май хăвна мухтакан пӳрнӳсене те:—Сывă пултăр манăн пӳрнем! Сывă пултăр çак шухăша вĕçлекен пуçăм! Сывă пултăр йăмăкăм, арăмăм, ачамсем,—темеле пулнă.

Никандр тусăм! Йал санран кулмасан камран култăр. Хăвна ху мухтакан хутăнта, хăвăн пӳрнӳпе (учитĕл пӳрнисемпе) есĕ Матроңна, Андрейанăв, Акрапина, Василев, Федăрăвă тесе çырса тултарнă. Хăвна мухтама пултаратăн пулсан та, суйа хутсем çырма пĕлетĕн пулсан та, çынсен йачĕсене çырма пĕлейместĕн-ха! Никандр тусăм! Хăвăн йăмăкна та „урра“ çĕкле есĕ. Ара есĕ хушнă тăрăххăн çав çӳлте асăннă хут çине вăл та алă пусса ывăннă ĕнтĕ. Еçре ывăннă çынна чыс кирлех ĕнтĕ. Епĕр те есĕ хăвна ху мĕнле чапа кăларма шут тытнине пĕлсен тĕлĕнсе хытса карăмăр пулин те, „Капкăн“ урлă „чыс тăвасах“ тесе шутларăмăр.

*Кашлинке.*

---

# САВĂ ВĂРЛАКАН

Хурах! Çаратаççĕ! Йетĕрне районĕнчи Кăташра пурăнакан Николай Цветков çаратать.

— Кама?

— Малала вулăр:

### Марк Аттай сăвви

Сатри тенкел тап-таса
Ларса хаçат вулар-и?
Пĕр-пĕринпе ăмăртса,
Тусăм, зайом сарар-и?

Вату тăхлачă Татйан
Йурă тăсса йанă;
Мĕншĕн тесен вăл пайан
Çĕн зайом туйаннă.

Ӳсет савнă çĕршыв ман,
Чунтан хĕпĕртетĕп;
Çавăнпа та зайома
Анлăн сарас тетĕп.

Йурăм çитрĕ ман вĕçне,
Тусăмсем, сыв пулăр!
Зайом çырма кашнийех
Йалсоветне утăр.

### Ник. Цветков сăвви

Аслă çутă клубра,
Ларса хаçат вулар-и?
Иккĕн пĕрле ăмăртса,
Ваңкă, хаçат çырнар-и?

Стахавăвĕц Мирун
Йурă тăсса йанă.
Мĕншĕн тесен, вăл пайан,
Хаçат нумай сарнă.

Тăван çĕршыв ӳсет ман,
Епĕ хĕпĕртетĕп.
Çавăнпа та хаçата
Анлăн сарас тетĕп.

Йурă çитрĕ ман вĕçне,
Йулташсем, сыв пулăр
Кашнийех хаçат илме
Пуштăна вĕçтерĕр.

Марк Аттайăн „Зайом такмакĕсем“ сăвви „Капкăн“ журналра 1936 çулта ийулĕнче пичетленнĕ. Николай Цветковăн „Такмаксем“ сăвви Йетĕрнери „Колхозник йулташĕ“ хаçатра кăçал ийунĕн 12-мĕшĕнче пичетленнĕ. Акă вĕсем:

Ытти куплечĕсем те çавăн пек. Вăрă вăрăм, куçĕ чармак, теççĕ. Цветков ытлашши вăрăм çынах мар та, куçĕ чармак вара. Анчах куçĕ чармак пулин те, сăвăçсен хисепне кĕрес шучĕ, йĕплĕ çăмах хуранне кĕрсе ӳкрĕ.

*Ленимо Точи.*

---


„Канаш“ хаçат кăларакан чăвашсен сатирăпа кулăш литературă журналĕ

# КАПКĂН

ХАКĔ: 3 уйăха—1 тенкĕ те 20 пус; 6 уйăха—2 тенкĕ те 40 пус; çулталăка—4 тенкĕ те 80 пус.

**Кашни почтă уйрăмĕсемпе агентствăсенче çырăнса илме пулать.**

Чăваш республикĕ тулашĕнчисем „Капкăн“ çырăннă укçана çак адрĕспа куçараççĕ:
Чебоксары. Дом Связи. Союзпечать.

**Журнал номĕрĕсем пĕр татăксăр пырса тăччĕр тесе вăрăм вăхăта (çулталăка) çырăнса илме тăрăшăр!**

# 1937 çула ВАЛ̧Л̧И ÇЫРĂНСА ИЛĔР!

## „Канаш“ хаçат издатĕлстви çак хаçат-журналсем кăларса тăрать:

| | Уйăхра миçе хут тухать | Çырăнса илмели хаксем | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | 12 уйăха | | 6 уйăха | | 3 уйăха | | 1 уйăха | |
| | | Т. | П. | Т. | П. | Т. | П. | Т. | П. |
| **„КАНАШ“** ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ | 25 | 30 | — | 15 | — | 7 | 50 | 2 | 50 |
| **„ÇАМРĂК КОЛХОЗНИК“** ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн хаçачĕ | 12 | 7 | 20 | 3 | 60 | 1 | 80 | — | 60 |
| **„КОЛХОЗНИК ЙАЛАВĔ“** ПСК(б)П Обкомĕпе Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ | 10 | 6 | — | 3 | — | 1 | 50 | — | 50 |
| **„ПИОНЕР САССИ“** ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕн хаçачĕ | 5 | 3 | — | 1 | 50 | — | 75 | — | 25 |
| **„КАПКĂН“** Кулăш журналĕ, ӳкерчĕксемпе илемлетсе кăларăççĕ | 1 | 4 | 80 | 2 | 40 | 1 | 20 | — | 40 |




**Хаçат-журналсене пиçмоносцăсемпе пуштă уйрăмĕсем, пуштă агĕнтствисем урлă, хаçат-журнал сарма уйăрнă йулташсем урлă çырăнса илмеле. Хаçат-журналсем пĕр татăксăр пырса тăччăр тесе вăрăм вăхăта (çулталăка, çурçула) çырăнса илме тăрăшăр. Шупашкар хулинче тĕп пуштăпа пуштă уйрăмĕсенче çырăнса илмеле.**

**Ку номĕрти ӳкерчĕксем пурте В. А. Филиппăвăн.**

**Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ*.** **Ответлă редактăр *П. И. ИВАНОВ*.**

Сдано в производство 4/VIII—37 г. Подписано к печати 15/IX—37 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 673. Заказ № 1754

Формат бумаги 58×88м¹/₈ Об'ем 2,5 п. л. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 3900. Изд. газ. „Канаш“




Франко çарĕнче

— Епĕр вăрçăра пайан çĕнтерӳ турăмăр. Правительствă çарĕсем чупаççĕ... Май килсен тепĕр чухне тĕплĕн пĕлтерĕп...

— Апла пулсан есĕр мĕншĕн калама та васкаттăр?

— Мĕншĕн тесен вĕсем кашни минутрах кунта чупса çитме пултараççĕ.